ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН СУДЬЯСЕН КВАЛИФИКАЦИ КОЛЛЕГИЙЁНЧИ ОБЩЕСТВЕННОСТЬ ПРЕДСТАВИТЕЛЁСЕНЕ УЙĂРСА ЛАРТМАЛЛИ ЙЁРКЕ ÇИНЧЕН" САККУНЁН 1 ТАТА 5^1 СТАТЙИСЕНЕ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ОБЩЕСТВО ПАЛАТИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2025 çулхи ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин судьясен квалификаци коллегийёнчи общественность представителёсене уйăрса лартмалли йёрке çинчен" 2002 çулхи çĕртме уйăхĕн 15-мĕшĕнчи 16 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2002, 50 №; 2012, 92 №; "Республика" хаçат, 2019, пуш уйăхĕн 6-мĕшĕ; 2021, нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 1 статьяра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

2) 5^1 статьян 1-мĕш пайне çакăн пек çырса хурас:

"1. Федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин судьясен квалификаци коллегийёнчи общественность представителĕн полномочи-

йĕсене Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăнăвĕпе çак тĕслĕхре срокчен вĕçлеме пултараççĕ:

а) Чăваш Республикин судьясен квалификаци коллегийĕнчи общественность представителĕ хăй пуçарнă чухне;

ă) Чăваш Республикин судьясен квалификаци коллегийĕнчи общественность представителĕ саккунлă йĕркепе вăя кĕнĕ суд приговорĕпе палăртнă преступлени тунă чухне;

б) Чăваш Республикин судьясен квалификаци коллегийĕнчи общественность представителĕ Федераци саккунĕн 11 статйин 8-мĕш пункчĕн иккĕмĕш тата пиллĕкмĕш абзацĕсемпе пăхса хăварнă требованисене пăхăнман чухне;

в) Чăваш Республикин судьясен квалификаци коллегийĕнчи общественность представительне ют çĕршыв агенчĕсен реестрне кĕртнĕ чухне;

г) Чăваш Республикин судьясен квалификаци коллегийĕнчи общественность представителĕ Чăваш Республикин судьясен квалификаци коллегийĕн ларăвĕсенче тăватă уйăх хушши витĕмлĕ сăлтавсемсĕр пулман чухне;

д) Чăваш Республикин судьясен квалификаци коллегийĕнчи общественность представителĕ Федераци саккунĕн 11 статйин 8-мĕш пункчĕн пĕрремĕш абзацĕнче кăтартнă должноçа йышăннă е ĕç-хĕле пурнăçланă чухне.".

2 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Общество палати çинчен" 2011 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнчи 6 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2011, 89 №; 2012, 92 № (I том); Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 11 №; 2014, 5, 11 №-сем; 2016, 10 №; 2017, 7 №; "Республика" хаçат, 2019, çу уйăхĕн 15-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 18-мĕшĕ; 2021, пуш уйăхĕн 24-мĕшĕ; 2024, ака уйăхĕн 10-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 6 статьян 11-мĕш пайĕн 1-мĕш пункчĕн пĕрремĕш абзацĕнче "çак статьян 5–7-мĕш пайĕсемпе" сăмахсене "çак статьян 5-мĕш тата 6-мĕш пайĕсемпе" сăмахсемпе улăштарас;

2) 8 статьян 2-мĕш пайĕн 1-мĕш пунктĕнче "патшалăх влаçĕн саккунсем кăларакан (представительлĕ) органĕсен" сăмахсене "саккунсем кăларакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

3) 11 статьян 2-мĕш пайĕн 3-мĕш пунктĕнче "(Раççей Федерацийĕн субъекчĕн патшалăх влаçĕн ĕç тăвакан чи аслă органĕн ертӳçин)" сăмах-сене кăларса пăрахас.

3 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2025 çулхи ака уйăхĕн 29-мĕшĕ
28 №